# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

# Районта велоспорт уйрăмĕ уçăлчĕ

***Чăваш Енре пурăнакансене физкультурăпа спорта ытларах явăçтарассинче, çакна валли майсем туса парассинче «Демографи» наци проекчĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Нацпроект шайĕнчи «Спорт – норма жизни» регион проекчĕпе вара муниципалитетсене те спортăн тĕрлĕ енĕсене «çитерме» палăртса хунă. Вĕсенчен пĕри, велоспорт, иртнĕ эрнере Муркаш районне «çитрĕ»: Мăн Сĕнтĕрте Чăваш Республикин Спорт министерствин В. Ярды ячĕпе хисепленсе тăракан Олимп резервĕн çиччĕмĕш номерлĕ спорт шкулĕн велосипед спорчĕн уйрăмĕ уçăлчĕ.***

Çак ятпа савăнăçлă лару-тăрура иртнĕ мероприятие Чăваш Республикин физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ Алексей Нягин тата Муркаш район пуçлăхĕ Игорь Николаев хутшăнни хăех ку пулăм республикăшăн та, районшăн та пĕлтерĕшлине кăтартса пачĕ.

Игорь Николаев хăнасене Муркаш çĕрĕ çинче хапăл туса йышăннă май велоспорт муркашсемшĕн ют маррине палăртрĕ. Çулсеренех майăн 9-мĕшĕнче велоспорт енĕпе СССР спорт мастерĕн Владимир Шалтыковăн парнисене çĕнсе илессишĕн районти çамрăк спортсменсем старта тухнине аса илтерчĕ. Çак уйрăм уçăлнăран вара ку ăмăртăва та малашне ытларах çамрăк  хутшăнас шанчăк пуррине пĕлтерчĕ район пуçлăхĕ, çĕнĕ спорт секцине çӳреме тытăнакансене ăнăçу сунчĕ.

Алексей Нягин муниципалитетпа спорт министерстви хушшинчи çак çыхăну, уйрăмах пысăк спорта аталантарма районсенче укçа-тенкĕ çителĕксĕррине шута илсен, икĕ еншĕн те тупăшлине палăртса びаларĕ. Спорт министерстви ку ĕçре малашне те пулăшса пыма хатĕррине палăртрĕ.

Халĕ велоспорт пирĕн республикăшăн та йăлана кĕнĕ спорт тĕсĕ шутĕнчех ĕнтĕ, анчах иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче ку пачах та апла пулман. Раççейĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ, Чăваш патшалăх педагогика университечĕн спорт дисциплинисен кафедрин профессорĕ Владимир Краснов хăйĕн сăмахĕнче велоспорт уйрăмĕ Муркаш районĕнче ăнсăртран уçăлманнине каларĕ. Унтан та ытларах, маунтинбайк ăмăртăвĕсем, вăл шутра ют çĕршыв спортсменĕсем хутшăннипе иртнисем те, шăпах Муркаш çĕрĕ çинче республикăра чи малтан пулнине пĕлтерчĕ. «Вăл вăхăтра маунтинбайка спорт тĕсĕ пек йышăнсах каймастчĕç Чăвашра. Кунта вара, Муркаш районĕнче, чи малтанах кунти спорт шкулĕн директорĕ Александр Сидюшкин пулăшу алли тăсса панинчен маунтинбайк ăмăртăвĕсем ирттерме пуçларăмăр. Çакăн хыççăн республикăра маунтинбайка хăватлăн аталантарма çул уçăлчĕ», – палăртрĕ тĕнчипе паллă спортсменсене ӳстернĕ тренер.

Çак уйрăма уçни Муркаш районĕнче те пулас Калентьевăсене тупса палăртма пулăшасса шанать спорт шкулĕн директорĕ Василий Павлов. Ирина Калентьева – Владимир Красновăн воспитанникĕ, 2008 çулта иртнĕ Олимп вăййисен бронза призерĕ пулнă.

«Демографи» наци проекчĕ шайĕнчи «Спорт – норма жизни» регион проекчĕпе, çавăн  пекех «Чăваш Республикин физкультурăпа спорта аталантарассин стратегийĕпе» килĕшӳллĕн муниципалитетсемпе тачă çыхăнса ĕçлесси те мала тухать. Паян – пирĕн пĕрремĕш тĕслĕх. Çак уйрăма уçасси пирки эпир йышăнăва тĕплĕ шухăшласа турăмăр. Пирĕн пата муркашсем çырупа тухнă хыççăн районти майсене, хамăрăн хăвата тишкертĕмĕр. Кунта, Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче, унччен те велоăмăртусем ирттернĕ, трасса маршрутне палăртнă. Пирĕн енчен ăста кадрсемпе тата инвентарьпе, велосипедсемпе тивĕçтерессипе ыйту кăларса тăратмасть тесе шутларăмăр. Çапла эпир велоспорт уйрăмне уçма йышăнтăмăр. Хальлĕхе уйрăм кунти Культурăпа кану центрĕнче вырнаçĕ. Пире валли пӳлĕм уйăрса панă ĕнтĕ. Каярах вара пирĕн уйрăм Мăн Сĕнтĕр шкулне куçĕ», – пĕлтерчĕ спорт шкулĕн директорĕ Василий Павлов.

Мăн Сĕнтĕрти уйрăма çав кун тĕлне ятарлă велосипедсем те илсе çитернĕччĕ. Тренировкăсене çӳрес текенсем валли спорт тумĕпе ытти инвентарь те çителĕклĕ пулмалла.

Ятарлă велосипед вара йӳнĕ мар – чи ансат велосипечĕ 60 пин тенкĕ тăрать. Апла пулсан ял ачисене спорт инвентарĕпе тивĕçтернине тата тренировкăсене ăста специалист Ольга Терентьева ертсе пынине ашшĕ-амăшĕсем те пысăка хурса хакласса шанмалла.

Ольга Терентьева – маунтинбайк енĕпе Раççей спорт мастерĕ, юниорсем хушшинчи тĕнче первенствин кĕмĕл призерĕ, Тĕнче кубокĕн кĕмĕл призерĕ, тĕнче шайĕнчи тата Раççей чемпионачĕсен çĕнтерӳçипе призерĕ. Çакăнпа пĕтĕмпех каланă темелле.

Тĕл пулăва килнĕ ачасемпе аслисене спорт шкулĕн воспитанникĕсем, хĕр ачасем, залтах тĕрлĕ хăнăхтару туса кăтартрĕç. Вĕсем çӳллĕ çĕртен (пирĕн тĕслĕхре сцена çинчен пулчĕ) велосипедпа сикме, велосипедăн пĕр урапи çинче кăна ярăнма пултарнине те, ыттине те курса тĕлĕнме май пулчĕ. Апла кăçал велоспорт секцине çӳреме тытăннă ачасем пĕр-икĕ çултан çакăн пекех пулĕç... Илĕртӳллĕ паллах.

Велоспорт вара çынна спортпа туслаштарать кăна мар, тренерсем илсе кăтартнă тĕслĕхсем тăрăх, сывлăха çирĕплетме те пулăшать, тĕнче курма та майсем парнелет. Çакна Ольга Терентьева хăйĕн тĕслĕхĕпе те çирĕплетсе пама пултарать. Ăста кăна пулса курман пулĕ вăл ăмăртусене хутшăннă чухне.

Спорт шкулĕн воспитанникĕсен çитĕнĕвĕсем те куç умĕнчех. Нумаях пулмасть Челябинск облаçĕнче маунтинбайк енĕпе пĕтĕм Раççейри ăмăрту иртнĕ. Унта хутшăннă чăваш велосипедисчĕсем хăйсене тивĕçлĕ шайра кăтартма пултарнă, республика ятне яман. Республикăн пĕрлештерĕнĕ команди эстафетăра кĕмĕл призер пулса тăнă. Уйрăм наградăсем те савăнтарнине палăртрĕ Василий Павлов: Раççей спорт мастерĕ Евгений Евграфов  икĕ медаль – ылтăнпа кĕмĕл çĕнсе илнĕ, Алексей Анисимов кĕмĕлпе бронза медальсене тивĕçнĕ, Антон Степанов – кĕмĕле. Пилĕк спортсмена 2021 çул валли Раççейĕн пĕрлештернĕ командине суйласа илнĕ... Апла маунтинбайкра тăвалла сахал мар хăпарма тивет пулсан та, республика спортсменĕсем малаллах ăнтăлни курăнать.

Спорт шкулĕн директорĕ Василий Павлов тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Наталья Мареева малашне тачă çыхăнура ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве те алă пусса çирĕплетрĕç. Ку вара икĕ ене те ĕçе тивĕçлĕ шайра йĕркелесе пыма, ачасене маунтинбайкпа кăсăклантарма, çитĕнӳ çулĕпе аталантарма хистет.



**Чăваш Ен физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ Алексей Нягин:**

**«Республикăн Физкультурăпа спорт министерстви массăллă спорта та, пысăк спорта та аталантарас тĕллевлĕ. Çавăнпа та «Спорт – норма жизни» регион проекчĕпе муниципалитетсемпе тачă çыхăнса ĕçлессине те çирĕплетсе хунă.**

**Çак проект хăватлăрах ĕçлеме тытăннине эпир шăпах паянхи событи урлă куратпăр. Паян Мăн Сĕнтĕрте велоспорт уйрăмĕ уçăлни ку ĕçе тата пысăкрах импульс парĕ тесе шутлатăп. Вырăнти уйрăма спорт шкулĕ ăста специалистпа кăна мар, инвентарьпе те тивĕçтерет. Паллах,  çакă муниципалитетшăн финанс ыйтăвне татса парассинче пысăк пулăшу пулса тăрать. Халĕ чи кирли – ачасене хавхалантарма пултарасси».**

Муркашсен ырă тĕслĕх те çук мар: Шурча тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Надежда Антоновăпа Мария Семенова Раççей чемпионачĕсен призерĕсем пулма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ, Кашмаш тăрăхĕнчи Виктория Савельевăна та палăртмалла.

В. Ярды ячĕпе хиепленекен спорт шкулĕн Муркаш районĕнчи уйрăмпа çыхăннă плансем те пысăк. Владимир Краснов тренер малашне кунта республика кубокĕн тапхăрĕсене те ирттерес шухăшлине пĕлтерчĕ. Вырăнти библиотекăна хăйĕн кĕнекисене парнеленĕ май, тренер ачасене вĕсемпе паллашма сĕнчĕ. Кĕнекесенче маунтинбайк, велоспорт пирки тĕплĕн çырса кăтартнă.

Çакăн хыççăн залта ларакан ачасем пĕр-пĕринпе пăшăл-пăшăл туса илчĕç те велосипедсемпе «паллашма» васкарĕç – пысăк спорта хăйсен пĕрремĕш пĕчĕк утăмне турĕç.





# «Точка роста» центр – Калайкасси шкулĕнче

**Çак кунсенче Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта та гуманитари тата цифра вĕренӳ профилĕсен «Точка роста» центрĕ уçăлчĕ. Ку вăл районти шкулсенче уçăлнă кун йышши виççĕмĕш центр пулчĕ.**

«Точка роста» центр кунта уçăлни сирĕншĕн тата сирĕн шкулшăн кăна мар, ку тăрăхра пурăнакансемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çавна май халĕ кунта хальхи йышши пурлăхпа техника базине йĕркеленĕ. Малашне сирĕн вăхăт ыйтнă пек пахалăхлă пĕлӳ илме кăна мар, çавăн пекех шкул çулĕсенчех малашлăхри пурнăç профессине суйласа илме те майсем ытларах пулаççĕ», – терĕ район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова Калайкасси шкулĕнче аслă классенче вĕренекенсене савăнăçлă мероприятире.

Кун пек центрсене иртнĕ çул Йӳçкассинчи тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсенче уçнăччĕ. Çывăх вăхăтрах «Точка роста» центр Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекенсене те йышăнĕ. Асăннă центр валли кабинетсем йĕркелеме район бюджетĕнчен Калайкасси шкулне 300 пин тенкĕ, Çатракасси шкулне 283 пин тенкĕ уйăрса панă.

Шкул директорĕ Татьяна Ершова каласа панă тăрăх, центр уçма ОБЖ, информатика тата технологи кабинечĕсене йĕркелесе хатĕрлесе çитернĕ. Шкула хальхи оборудовани кӳрсе килнĕ. «Пирĕн шкул çакăн йышши центрсем хатĕрлессин программине хутшăннишĕн эпир питĕ хавас. Пире çакăн пек парне туса панишĕн эпир район тата республика ертӳçисене пысăк тав сăмахĕ калатпăр», – тет Татьяна Аркадьевна.

Зоя Юрьевна палăртнă тăрăх, кун пек центрсен задачи вăл çĕнетсе пуянлатнă пурлăхпа техника базипе вĕренӳре усă курма вĕренекенсене – «Технологи», «Математика тата информатика», «Физкультура тата ОБЖ» предмечĕсене алла илекенсене 100 процентчĕпех, цифра, естествонаука, техника тата гуманитари профилĕсен программисемпе уроксем хыççăн пĕлĕве ӳстерекенсене 70 процент явăçтарасси пулса тăрать. Вăл шутра вĕренĕвĕн дистанци тата сеть çыхăнăвĕн мелĕсемпе усă курса вĕренессипе те.

Çавăн пекех центр инфраструктурипе уроксемпе çыхăнман вăхăтра та усă курма палăртнă. Çапла майпа ку тăрăхра пурăнакан çынсен пĕтĕмĕшле культура компетентлăхне ӳстерме тата цифра мелĕсемпе усă курассине алла илме, ачасен, педагогсен, ашшĕ-амăшĕн шахмат пĕлĕвне, проект ĕçне-хĕлне, пултарулăх мелĕсене аталантарма май пур.

Хĕрлĕ хăйăва каснă хыççăн хăнасем тата вĕренекенсем çĕнетнĕ пур кабинетра та пулса курчĕç. Акă информатика кабинетĕнче хальхи çĕнĕ компьютерсем вырнаçтарнă, 3д принтер та пур, квадрокоптер та, шахмат гостинăйĕ тата ытти те чылай.

Кунта физкультура учителĕ Виталий Моисеев шахматла выляссипе мастер-класс ирттерчĕ. Мастер-классем çавăн пекех пĕрремĕш пулăшу парассипе те, роликсем тăвассипе те пулчĕç, квадрокоптерпа мĕнле ĕçлемеллине те кăтартрĕç.

«Точка роста» центр уçăлни пĕрремĕш кунах шкул ачисене савăнăçлă самант сахал мар парнелерĕ. Малалла вара вĕсем татах ытларах пулĕç. Чи пĕлтерĕшли вара, Зоя Юрьевна палăртнă тăрăх, вĕсене хăйсем валли професси суйласа илме, хальхи обществăра хăйсен вырăнне тупма лайăхрах майсем пулĕç.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***










**Чебоксарское ЛПУМГ – филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» уведомляет**

## ВНИМАНИЕ! ИСТОЧНИК ПОВЫШЕННОЙ ОПАСНОСТИ

К сведению руководителей промышленных предприятий, строительно-монтажных организаций, колхозов, совхозов, фермерских и арендных хозяйств, других землепользователей и частных лиц.

**Чебоксарское ЛПУМГ – филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»** уведомляет: по землям **Моргаушского района** проходят газопроводы-отводы высокого давления (от 55 до 75 атмосфер), обеспечивающие потребности промышленных предприятий и населения района в природном газе, являющиеся **объектами повышенной опасности!**

Сводом правил СП 36.13330.2012. Магистральные трубопроводы. Актуализированная редакция СНиП 2.05.06-85*, табл.№4 (утв. Приказом Госстроя от 25.12.2012 N108/ГС) установлены **МИНИМАЛЬНЫЕ РАССТОЯНИЯ** от осей газопроводов и границ газораспределительных станций (далее – ГРС) до населенных пунктов, отдельных промышленных и сельскохозяйственных предприятий, зданий и сооружений, отдельно стоящих нежилых и подсобных строений, гаражей и открытых стоянок для автотранспорта, коллективных садов, автомобильных и железных дорог. **Минимальные расстояния от газопроводов составляют от 100 до 350 метров** в зависимости от диаметра, степени ответственности объектов, **указанных на знаках** закрепления газопроводов, и служат для **обеспечения безопасности людей и объектов.**

У собственников земельных участков, где размещены подземные объекты трубопроводного транспорта ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» в пределах установленных минимальных расстояний, имеются ограничения прав в связи с установлением охранных зон таких объектов (Земельный кодекс Российской Федерации от 25.10.2001 № 136-ФЗ, ст.90, п.8).

В соответствии с требованиями ст.32 Федерального Закона РФ от 31.03.1999г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в Российской Федерации здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, **ПОДЛЕЖАТ СНОСУ за счет средств юридических и физических лиц, допустивших нарушение.**

Кроме того, Правилами охраны магистральных трубопроводов, утв. Минтопэнерго РФ 29.04.1992, Постановлением Госгортехнадзора РФ от 22.04.1992 № 9, Правилами охраны магистральных газопроводов, утв. Постановлением Правительства РФ от 08.09.2017 №1083, в целях исключения возможных повреждений газопроводов установлены **ОХРАННЫЕ ЗОНЫ** газопроводов в виде участков земли, примыкающих к газопроводу на всем протяжении **на расстоянии 25 метров от оси газопровода с каждой стороны и в 100 метрах от каждой стороны ограждения ГРС.**

**ЛЮБЫЕ РАБОТЫ в охранных зонах без письменного разрешения** Чебоксарского ЛПУМГ – филиала ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород», эксплуатирующего газопроводы и ГРС, **ЗАПРЕЩЕНЫ**.

В настоящее время существуют **СЛУЧАИ ПОВРЕЖДЕНИЯ газопроводов** строительной техникой организаций, выполняющих земляные работы в охранных зонах газопроводов без соответствующего разрешения.

Механическое повреждение газопровода высокого давления может привести к **НЕГАТИВНЫМ ПОСЛЕДСТВИЯМ: взрыв большой разрушительной силы, человеческие жертвы, материальные потери и прекращение газоснабжения потребителей.**

**Виновные** в нарушении Правил охраны магистральных трубопроводов и СНиП **подвергаются уголовному преследованию** по ст. 217 Уголовного кодекса РФ.

**СВЕДЕНИЯ о местонахождении газопроводов и ГРС, а также размер установленной зоны минимально допустимых расстояний и охранной зоныконкретногоземельногоучастка,** заинтересованные юридические и физические лица могут получить **в местном комитете по земельным ресурсам и землеустройству**, а также в Чебоксарском ЛПУМГ – филиале ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

**При обнаружении утечек газа** в охранных зонах и зонах минимальных расстояний магистральных газопроводов работ, **по вопросам производства строительно-монтажных и других работ** в зоне прохождения газопроводов, а также для предупреждения нежелательных последствий **при оформлении сделок с землями**, по которым проложены газопроводы, обращайтесь в Чебоксарское ЛПУМГ – филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» по телефонам: 8-(8352) – 30-54-09, 30-54-22 или по адресу: 428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25.

**Сĕнӳсем**

## Пĕлетĕр-и эсир?

Енчен те урайĕнче е сĕтел-пукан çинче кантăк ванчĕ пулсан, пăшăрханса ан ӳкĕр. Шывра йĕпетнĕ вата татăкĕ илĕр те ваннă вырăна сăтăрса илĕр. Мĕнпур ванчăк ун çумне çыпăçса тасалĕ.

* * *

Тум çумалли машинăна тӳмеллĕ кĕпе е ытти япала çума яриччен малтан тӳмисене тӳмелĕр. Çавăн пек тусан вĕсем татăлмĕç тата тум туртăнса формине çухатмĕ.

* * *

Пӳлĕмри çутă лампочкисене вăхăтран вăхăта нӳрĕ татăкпа сăтăрса илмелле, унсăрăн тусанлă лампочкăн çути çурă майлă çухалать. Çапла тусан малтанхи çутă каялла таврăнать.

* * *

Чылай чухне пушмак шнурокĕ тăрринчи хытă пай хăйпăнса ӳкет, çавна май вăл сӳтĕлме пуçлать, тирме те меллĕ мар. Шнурок тăррине тĕссĕр е хăй тĕслĕ лакпа сĕрсе хытарсан малтанхи пекех пулĕ.

* * *

Мăкалнă çĕççе хăйриччен малтан тăварлă сивĕ шывра 20 – 30 минут хушши тытмалла. Çапла тусан вăл наччасра çивĕчленĕ.

* * *

Пирус мăкăрлантаракансем пирус тĕпĕ хумалли савăт епле хуралса ларнине кураççĕ ĕнтĕ, ăна тасатма çăмăлах та мар. Савăта шултра тăварпа сăтăрмалла та юхакан шывра чӳхемелле, çĕнĕ евĕрех çуталĕ.

* * *

Хулăн, хытă пусмана килти çĕвĕ машини çĕлеймест. Çĕлемелли вырăна çурта тĕпĕпе сăтăрсан çĕвĕ йĕппи çăмăллăнах пусма витĕр тухĕ. Çурта тĕпĕпе сăтăрнă çип ахальлинчен çирĕпрех, унпа тӳме çĕлесен чылайлăха пырĕ.